**Ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе**

# Пулас тухăçшăн паян кĕрешер

Çулла – çуна, хĕлле урапа хатĕрлеме хушнă ваттисем. Çак сăмахсенче ĕçсен вăрварлăхĕ, вĕсене вăхăтра пурнăçлани тата пысăк тухăç никĕсне хывса хăварни. Çулталăк вĕçленсе пырать, сисмĕпĕр те – çур аки ума тухса тăрĕ. Çав ответлă тапхăрччен пирĕн уйрăмах вăрлăх хатĕрлессипе тата паян кĕрхи культурăсене чир-чĕртен сыхласа хăварассипе çанă тавăрса ĕçлемелле. Хуравăн пĕр пайĕ илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Куратпăр, çуртри вăрлăхĕ хатĕрлессипе ĕçлемелли пайтах. Вăл вара пире пурĕ 33220 цетнер кирлĕ.

Паян ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем умĕнче тăракан тĕп задача – кĕрхи культурăсен калчисене тымар тата шурă пăнтăх (снежная плесень) чирĕсенчен сыхласа хăварасси. Кĕрхи культурăсем çулленех пысăк тухăç панăран юлашки çулсенче хуçалăхсем вĕсемпе ытларах ĕçлеме пуçларĕç. Тĕрĕссипе агротехнологипе хуçалăхсенче кĕрхи культурăсен лаптăкĕсем пĕтĕм тырпулăн 40-50 проценчĕ чухлĕ пулмалла. Çаксене шута илсе хуçалăхсем кăçал 5364 гектар (пĕлтĕр 3720 гектарччĕ) кĕртрисем акса хăварчĕç. Уйрăмах пысăк лаптăксем “Ударник” (840 га), Суворов яч. хис. (630 га), “Свобода” (410 га), Ильич яч. хис. (340 га), “Рассвет” (420 га), Чкалов яч. хис. (350 га) хуçалăхсенче. Паянхи тирпейлĕ çанталăкпа туллин усă курса вĕсене хĕл кунĕсенче тымар тата шурă пăнтăх чирĕсемпе чирлессинчен сыхламалла, вĕсене пула пысăк çухатусем пуласран асăрханмалла. Çакна тума паян пирĕн хуçалăхсен майĕсем те, вăйĕсем те пур. Ĕçне пурнăçлама ĕлкĕрсе юлмалла кăна. Асăннă хăрушлăхсене сирме фундазол тата колфугосупер препаратсемпе ĕçлени май парать. Вĕсене гектар пуçне 400-500 грамм сапма паян çĕр те çăрăлмасть, апла пулсан калчасем те вилмеççĕ. Ку ĕçе паянрах тусан калчасем те хĕле кĕриччен çирĕпленсе юлаççĕ, чирсем те пĕтеççĕ.

Паянхи куна çак ĕçе Ильич яч. хис. (180 га), “Ударник” (450 га), “Герой”, “Сеятель”, Чкалов яч. хис. хуçалăхсем пуçăнчĕç те ĕнтĕ.

Акнă вăрлăха упраса хăварни, çур аки валли паха вăрлăх хатĕрлени – РФ Президенчĕ çул панă наци проекчĕн пĕр пайĕ. Паха вăрлăха вара паян çур аки валли ял хуçалăхăн наукăпа тĕпчев институтĕнчен, Çĕрпӳ районĕнчи “Колос” хуçалăхран, Вăрнар районĕнчи “Санары” агрофирмăран туянма пулать. Ку ĕçе те кая хăварас марччĕ.

**А. ПАВЛОВ,**
**район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРТРИ ВĂРЛĂХĔСЕН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх тĕрĕслеттернĕ. 2. Кондициллĕ вăрлăх. 4. Кондицие ларман вăрлăх (центнерпа).**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 2228 | 100 | 2128 |
| “Хлебороб” | 379 | – | 379 |
| “Восток” | 1117 | 187 | 930 |
| “Герой” | 1906 | 748 | 1178 |
| К. Иванов яч. хис. | 300 | – | 300 |
| Ильич яч. хис. | 1920 | 150 | 1770 |
| Ленин яч. хис. | 432 | – | 432 |
| “Лидер” | 265 | – | 265 |
| “Оринино” | 2029 | 1644 | 385 |
| “Передовик” | 1170 | 471 | 669 |
| “Свобода” | 3400 | 2480 | 920 |
| “Сеятель” | 580 | – | 580 |
| Суворов яч. хис. | 2215 | 412 | 1803 |
| “Рассвет” | 2004 | 1238 | 766 |
| “Ударник” | 4233 | 1633 | 2600 |
| Чапаев яч. хич. | 1620 | 330 | 1290 |
| “Чемеево” | 960 | 220 | 740 |
| Чкалов яч. хис. | 1038 | 531 | 507 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **27796** | **10124** | **17672** |

**Саккун хуралĕнче 10 çул**

# Суд приставĕсем шанăça тӳрре кăлараççĕ

Суд приставĕсем Раççейре ĕлĕк-авалах пулнă. Историлле чăнлăхра вĕсем судпа пулăшу тивĕççĕсене пурнăçланă: ответ тытакансемпе свидетельсене суда чĕннĕ, суд йышăнăвĕпе шыраса илме палăртнă йĕркене пурнăçланă.

18 ĕмĕрте суд приставĕсен ĕçне пĕтерсе суд процесĕн пĕтĕм ĕç тăвакан пайĕ полици аллине куçнă. Анчах полицире ĕçлекенсем вĕсем çине хунă суд пулăшуçисен функцийĕсене пĕтĕм калăпăшпа пурнăçлама укçа-тенкĕ енчен хавхалантармантан суда пымалли çынсене унта илсе пырасси çине те тулли ответлăхпа пăхман. Çапла вара суд ĕçĕсем çулталăка е вуншар çула тăсăлса кайни те пулнă.

1864 çулхи суд реформи суд приставĕсен ĕçне те пырса тивнĕ. 1868 çулта 1864 çулхи Суд уставĕсемпе Ĕç производствин тулли правилисем кун çути курнă.

Суд приставĕ пулма обязательнăй йĕркепе Раççейре пурăнакан, саккунсемпе ĕçлеме çул çитнĕ, тирпейлĕ, саккунпа судра е общественноç умĕнче айăпланман арçынсене кăна илнĕ. Службăн пĕрремĕш çулĕнче суд приставĕ çак должноçăн кандидачĕ шутланнă, тĕрĕслев срокĕ витĕр тухнă. Ĕçе кĕрекен суд приставĕн 400-600 тенкĕ укçа салукĕ хывмалла пулнă, ăна тĕн çынни присяга тыттарнă.

1917 çулхи октябрьти революци хыççăн Раççей империйĕн кивĕ Суд системине пăрахăçланипе пĕрлех суд приставĕсен институчĕ те историе юлнă. Çĕнĕ тапхăрта судри пулăшу функцийĕсене судри ĕç тăвакансем пурнăçланă. Анчах пурнăç аталанăвĕ суд приставĕсен ĕçнех ыйтнă.

1997 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Патшалăх Думи çав çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче йышăннă “Суд приставĕсем çинчен” тата “Ĕç тăвакан производство çинчен” федераллă саккунсемпе килĕшӳллĕн суд приставĕсен службин ĕçлеме пуçланă. Çĕнĕ служба федераллă ĕç тăвакан органăн статусне илсе Раççей Федерацийĕн Юстици министерствине кĕнĕ. Суд приставĕсен службин йĕрке сыхлакан орган статусĕллĕ пулса ĕç тăвакан влаçăн çĕнĕ звени пулса тăнă.

“Суд приставĕсем çинчен” федераллă саккун ĕçлеме пуçласан Чăваш Республикинче те çĕнĕ службăн подразделенийĕсем йĕркеленме пуçланă.

2005 çулта РФ Юстици министерствин Управленийĕн Чăваш Республикинчи Суд приставĕсен службинчен Чăваш Республикипе ĕçлекен Федераллă суд приставĕсен службин Управленине туса хурсан вăл юридициллĕ хăй тĕллĕн орган пулса тăнă.

Суд приставĕсен службин çулсерен вăй илсе пырать, халăхра шанăç çуратать. Пирĕн паянхи тĕп тĕллевсем – суд йышăнăвĕсене, çынсен е предприятисен парăмĕсене шыраса илме налук органĕсем тунă йышăнусене кая юлмасăр çине тăрса пурнăça кĕртесси, судсен ĕçĕнчи йĕркене пăхса тăрасси.

Раççей шайĕнчи суд приставĕсен службин йĕркелĕвĕнчен Муркаш районĕ те айккинче юлмарĕ. Паянхи кун вăл – суд приставĕсен районти пайĕ. Пирĕн ретре хальхи вăхăтра ĕç тăвакан суд приставĕсем 8 çын тата судсенчи йĕркелĕхе тивĕçлĕ шайра тытассипе ĕçлекен 5 пристав. Хамăр тĕллевĕмĕре – суд решенийĕсене, парăмçăсем тĕлĕшпе налук органĕсен йышăнăвĕсене пурнăçласси – эпир вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлама тăрăшатпăр. Акă, кăçалхи 10 уйăхра кăна тĕрлĕ шайри налуксене 19 миллион тенкĕ шыраса илтĕмĕр. Вĕсенчен 12 миллион тенкине – суд решенийĕсемпе. Уйрăм сăмах алимент тӳлеменнисем пирки. Вĕсем тĕлĕшпе 120 ĕç пулчĕ. Вĕсенчен 13-шĕ патне прокуратурăпа пĕрле уголовнăй ĕç пуçарассипе ĕçлеме тиврĕ.

2008 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрекен “Ĕç тăвакан производство çинчен” саккун çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе пирĕн ĕç-хĕле çĕнĕлĕхсем кĕртет. Эпир вĕсене пурнăçлама хатĕр.

**Е. ИВАНОВА,**
**суд приставĕсен районти пайĕн пуçлăхĕ.**

**Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕслетпĕр**

# Москакассисем нацпроекта кĕреймеççĕ е наци проекчĕ вĕсене хăваласа çитеймест?

Хăвăрт аталанакан пурнăçра пурăнатпăр. Ĕлĕкех те мар ял хуçалăхне механизацилесси пирки калаçатчĕç, çывăракансене çӳллĕ трибунăсем çинчен питлетчĕç. Кайран çерем çĕрсем уçрăмăр, пусă çаврăнăшне тата агротехнологисене пăхăнса тыр-пул тухăçне 30-40 центнера, çĕр улми тухăçне 200-300 центнера е ытларах та, ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма 5 пин килограмм урлă каçартăмăр т. ыт. те. Мĕн тунипе лăпланни каялла утăм туни пулнине пурте пĕлетпĕр пулсан та, паян кахал çын çеç çĕнĕ технологисемпе наци проекчĕсем пирки калаçмасть, вĕсене пурнăçа маларах кĕртсе çĕнĕ ӳсĕм картлашкисене пусмасть. Анчах хура кĕркуннепе хĕл чиккине çитнĕ май ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ чух çăкăр тума пулăшакан техника çине алă сулнисем те куç хĕррине юлмарĕç. “Çĕнĕ технологи” хуçисемпе танлаштарас килет вĕсене. Иртнĕ кунсенче ирттернĕ рейдра тĕрĕслев серепине “Оринино”, “Передовик”, “Восток”, “Лидер”, “Свобода” хуçалăхсем çакланчĕç. Вĕсен тĕслĕхĕнче ырри те, пуçа хыçтараканни те пĕрре мар пулчĕ. “Оринино”, “Восток”, “Свобода” хуçалăхсенче техникăна управа лартассипе ырри кăна пулсан, Ярапайĕнче техникăна документсем тăрăх “Лидер” агрофирма çине куçарассипе тата техникăна управа лартассипе ĕçлекеленине курсан, “Передовик” хуçалăхра ĕç çине ик екки те тăвайкки тесе пăхни куç умне пулчĕ.



Е-281 выльăх апачĕ “çителĕклĕ” хатĕрлесе халтан кайнă. Хĕл кунĕсенче çăмăл пулĕ-ши ăна?

Кунта çакна хушса калас килет. Москакассисем техника упрасси çине пӳрне витĕр пăхни иртнĕ çул та пулнăччĕ. Çавна пула юсаса çитерейме техникăпах тухрĕç вĕсем кăçалхи çур акине, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе. Пĕтĕмлетӳ: ял хуçалăх производство кооперативĕ çу кунĕсенче утăна мĕн кирлин 43 процентне (566 тонна), сенаж 90 процент (1050 тонна) хатĕрленĕ, силос планпа пăхнин (1170 тонна) пĕр килограмне те янтăламан. Çынсемпе пĕрлех вĕçленĕ вырмара тырă тухăçĕ вăтамран гектар пуçне 11,9 центнер, 20 гектар çинчи çĕр улми вăтамран 36 центнер кăна пулчĕ. Ку çулпа кайса выльăх-чĕрлĕхе тухăçлă епле аталантарăн ĕнтĕ! Мĕн туни урок пулмалла пек те, анчах хуçалăхра тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тума васкамаççĕ. Ăшă та уяр кĕр кунĕсем иртсе пыраççĕ, анчах малашлăх пирки шутласа техникăна управа



Шурчасен (“Герой” хуçалăх) ял хуçалăх техники хĕле те, “АПКна аталантарасси” приоритетлă наци проектне пурнăça кĕртессипе ĕçлеме те хатĕрри паян кашни çын куçне курăнать. Ыттисемшĕн вăл тĕслĕх пулмалла.

лартасси пирки тăрăшни хуçалăх паркĕнче курăнмарĕ. Вăхăт 11 сехет кăна пулнине пăхмасăрах ку тĕлĕшпе ĕçлекен те куç тĕлне пулмарĕ. Çивитти айĕнче ларакан “хир карапĕсем” те хăйсене ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартса пĕтерессе тунсăхлăн кĕтеççĕ. Передача коробки ваннипе унта 50 метр çитеймен комбайн бункерĕ çинче кĕрхи нӳрĕкпе ātаланнă шит çӳллĕш калча хумханса ӳсет, БДТ тата РВК агрегатсем çум курăкĕпе йывăç айĕнче АПКна аталантараççĕ, наци проекчĕсене пурнăçласа пушаннă кустăрмаллă Е-281 агрегатпа выльăх апачĕ хатĕрлемелли Е-302 комбайн ыран юр çăвасса пăхмасăрах татах “ĕçе тухасшăн”. Тăвата корпуслă плуг иккĕмĕш çул (!) паркри çĕре сухаланине пăхма та, культиваторсем курăк айĕнчен аран курăннине (?) сăнама та çитес çул районта республика кунĕ иртнине пĕлнĕ вăхăтра питех те кăмăлсăр. Техника çине çапла пăхсан çитес çулхи ĕçсем малалла каясси пирки шутлама пулать-и? Çук паллах. Кунта çӳлти сăн ӳкерчĕкре пĕр çанталăк условийĕсенчех хамăр районти “Герой” хуçалăх уй-хирте ĕçлемелли техникăна епле управа лартнине кăтартни эпир калайман сăмахсене калать-çирĕплетет. Танлаштарса каласан, “Передовик” хуçалăхра ĕçлени мар, ĕçлеменни ытларах куç умĕнче. Ĕнерхине паяна, паянхине ырана хăваракансем техника шурă юрпа витĕниччен ăна управа лартассипе лару-тăрăва ырă еннелле улăштарасса шанма май парать-и? Пурăнăпăр – курăпăр, тĕрĕслевсем вĕçленмен-ха. Каплах пулсан çитес çулхи ĕçсем те Москакассисене экономика аталанăвĕче малалла ямĕç, ăнăçу кӳмĕç.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**



БДТпа РВК çум айĕнче. Вĕсем мĕн каланине эсир уйăрайратăр-и, курайратăр-и?



Конкурс ыйтăвĕ: мĕн тăваççĕ унта КУЛЬТИВАТОРСЕМ тата культиваторсемех-и вĕсем?



Бункер çинчи ешĕл калча – иртнĕ вырма палли. “Хĕрӳ те тухăçлă” пулчĕ вăл кăçал!